*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮН КУН

74 (2486) 1
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2014,
авăн, 24

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

ЭРНЕ

# Хаклашса тăма вăхăт çук



**...Халăх сĕт пуçтаракансем миçере килессе пĕлет те – пĕчĕк бидонсем йăтса ял пуçне тухнă. Кунта юлашки хыпарсене илтетĕн, сĕт хакĕн ылмашăнăвне сӳтсе явма хутшăнатăн. "Леш касра вун тăваттăпа пуçтарнă, пирĕн мĕншĕн пĕр тенкĕ катăкрах?"– вĕчĕрхенет пĕр кинемей. "Ара эсĕ паян тин куç уçрăн-им, санпа кам хаклашса тăрĕ!" – аллине сулать кӳрши.**

**Çакнашкал ӳкерчĕк кашни ялтах. Çынсем сĕт хакĕпе кăмăлсăр. Унччен экономика хутшăнăвĕсен вак ыйтăвĕ шутланнăскер паян пысăк политикăна куçрĕ-çке. Республика ертӳçисем яла килсен халăх çав калаçăва пуçаратех.**

Тĕрĕссипе, Михаил Игнатьевăн ерçӳ çукрах, районсене тухса ун йĕрке тумалла мар пек. Хресчене ним вырăнне хуман усламçăсене тăн кĕртекен тивĕçлĕ тытăмсем пур вĕт-ха, шел пулин те вĕсем ĕçлесе çитерейменни куç кĕрет. Ял пурнăçне витĕр курса тăракан республика ертӳçи çынсен нушине çывăха илсе вĕсен хутне кĕнине темиçе те сăнарăм.

– Сĕтĕн хăйĕн хакĕ пулмалла тесе эпĕ пĕрре мар каланă,– терĕ вăл пĕр тĕл пулура. – Самантпа усă курса пайтаçăсем нухрат туса юласшăн. Хресчен выльăх-чĕрлĕхе мĕнле пăхса ӳстерет, апат çиткелет-и – ку вĕсене вуçех хумхантармасть. Район администрацийĕсемпе вырăнти кăлавасен çак лару-тăрăва сăнасах тăмалла. Хака пĕр-пĕринпе калаçса татăлса юриех пĕчĕклетекенсем ытла та сĕмсĕрленеççĕ. Вырăнти влаç хăйĕн çирĕплĕхне кăтартмасан халăх пире мĕн калĕ.

Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ, ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов çурла уйăхĕнче сĕт пухакансене (республикипе 200 ытла организаципе предприниматель) канашлăва чĕннĕччĕ. Чылайăшĕ пыман. Шикли шикленнĕ – кĕрĕк пĕркеннĕ е чылайăшĕ ку мероприятие алă сулнă. Влаç – аякра, кунта эпир хамăр хуçа тенĕ ахăртнех.

Сергей Владимирович Канаш районĕн кураторĕ пулса çитмен ял хăварман тесен йăнăш пулмĕ. Пĕрлехи информаци кунĕнче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, ытти ведомство çыннисене хытах ӳпкелесе каларĕ. Налук пухакансемпе ветеринарсем мĕншĕн питĕ мăран? Министр палăртнă тăрăх – сĕтĕн пысăк пайĕ республика тулашне ăсаннине пĕлсе тăрсах хутсене пичет çапса параççĕ. Хамăрăн тирпейлекен предприятисен хăвачĕн 40 процентĕ ĕçсĕрри нимĕн чухлĕ те кулянтармасть иккен. Малтан шалти рынока апат-çимĕçпе ытлă-çитлĕ тултармалла, кайран кӳршĕ облаçсене леçме чару çук. Енчен те ветеринари службисем малашне те ӳрĕк-сӳрĕк ĕçлесен вĕсен ертӳçисен вырăнне урăххисене тупса лартас ыйтăва çине-çинех çĕклеççĕ. Çавăн патне пыратпăр.

Тăвай районĕнче пулнă чухне хăшпĕр çын ĕне сутас шухăшли сисĕнчĕ. Пĕр шухăшласан, сутма е какая ăсатма пулĕ-ха. Кама усă кӳрĕ ку? Сутсан кайран урăххине туянма йывăртарах. Тына пăруран сĕтлĕ ĕне тума темиçе çул кирлĕ. Чăваш ĕлĕкренпех выльăх нумай тытнă, çавăнпа паян республика шайĕнче "Кашни кил хуçалăхĕнче – ĕне" программа йышăнмалла тесе шухăшлатпăр.

Кĕтӳ йышĕ чакнине тепĕр самантпа сăлтавлаççĕ. Асăрхарăр пулĕ: тухтăрсемпе вĕрентекенсен, ытти тĕрлĕ кантурта ларакансен шалăвне хăпартрĕç те ялти интеллигенци выльăхпа аппаланасшăнах мар. Укçи пур та паха çимĕçрен татăк тăмаççĕ.

Ытти çулсенче ĕне тытакансене патшалăх енчен пулăшассипе нумай сăмахларĕç, лавĕ вырăнтан хускалманнине йышăнмалла. Нимĕн те улшăнман! Анăç санкцийĕсене кура Беларуçпа Хĕвел тухăç патшалăхĕсем сĕт продукчĕсемпе тивĕçтерессе шанатпăр-и? Ютран килнисем лавккасене хупласа хурĕç-ха, хамăрăн сĕт отраслĕ татах анса ларас хăрушлăх пур.

Апла пулин те хăшпĕр çĕрте ырри пур пирĕн. Сăмахран, Етĕрне районĕнчи "Ленинская искра" сăнав хуçалăхне илĕпĕр. Икĕ ĕне ферминче сăвакан 300 пуç ĕне, кил хуçалăхĕсенче – 900 пуç. "Кашни килограмм сĕтшĕн тырă, утă-улăм валеçетпĕр", – пĕлтерчĕ хуçалăх ертӳçи Валерий Герасимов. Патшалăх пулăшăвĕн витĕмĕ чакнипе çакнашкал утăм тунă Ачаксем. Вĕсен паха тĕслĕхне ыттисем алла илинччĕ.

Статистика суймасть. Юлашки тапхăрта Раççейре ĕне кĕтĕвĕн йышĕ çуллен 2-3 процент чакса пынă, сĕт 10 процент сахалрах суса илнĕ. Анăç чарăвĕсене пула пирĕн суту-илӳ мĕн ыйтнин 30 процентĕ чухлĕ сыр, 20 процент ĕне çăвĕ илсе çитереймен. Чĕр тавар сахал чухне ун хакĕ хăпарасса кĕтсех тăр. Авăн уйăхĕнче тирпейлекен предприятисем туянакан хака вăтамран 3-4,7 процент ӳстернĕ, юпа уйăхĕнче сĕтшĕн 5 процент ытларах пама хатĕр-мĕн. Паллах, лавккасенчи хаксем улшăнĕç.

Отрасльте пĕр-ик çултах курăмлă улшăну пулса иртесси (çĕнĕ, ку чухнехи технологипе тунă сĕт-çу комплексĕсене паян-ыран туса лартаймăпăр, ăратлăха лайăхлатасси – темиçе çула тăсăлакан ĕç) иккĕленӳллĕ.

Çапах мĕн пуррипе пĕлсе усă курсан продукци калăпăшне (сыр производстви аталанать) ӳстермелли майсем пуррине çирĕплетеççĕ. Тĕслĕхрен, çӳлерех асăннă "Ленинская искра", Йĕпреç районĕнчи "Путиловка" агрофирма, "Красный партизан" юлташлăхсем çуллен куккурус нумай акса тăваççĕ, çавăнпа сăвăм пысăкрах.

Республикăра сĕт пуçтаракансен канашне йĕркелеме сĕнекен те пур. Тен, чăн та, çак тытăмра йĕрке пулĕ. Выльăх усраканăн усламçăсемпе хаклашса тăма вăхăчĕ çукрах.

Ялсенче сĕт пуçтарасси мĕнлерех пулса пынине пĕлес тĕллевпе Элĕк районĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕпе Анатолий Прохоровпа çыхăнтăмăр.

– Иртнĕ эрне пуçламăшĕнче пĕр килограмĕ 13 тенкĕ те 50 пусчĕ. Халĕ 50 пус хушрĕç. Эпĕ астăвасса, пĕлтĕр çак тапхăрта 15 тенкĕччĕ.

Кӳршĕллĕ Етĕрнере те 14 тенкĕпе пухма тытăннă. Республикăн ытти районĕсенче те çавнашкал "ӳсĕм"...

**Вячеслав ГРИГОРЬЕВ.**

## Республика уй-хирĕнче

Уяр та типĕ çанталăк уй-хир ĕçĕсене палăрмаллах хăвăртлатрĕ. Авăн уйăхĕн 22-мĕшĕ тĕлне чылай хуçалăхра уйсем пушаннă. Ĕçченсем юлашки лаптăксенчен пахча çимĕç пуçтарса кĕртеççĕ, çĕртме тăваççĕ. Кăçал «сарă ылтăн» пӳлмене 565 443 тонна кĕнĕ. Гектарти вăтам тухăç 21,9 центнер. Кăтарту иртнĕ çулхинчен самай пысăкрах (пĕлтĕр – 18,2). Асăннă вăхăт тĕлне республикăри хуçалăхсем çĕр улми 7 987 гектар çинчен кăларса пуçтарнă (планпа пăхнин 90,7 процентĕ). Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Çĕрпӳ тата хăш-пĕр районта çак ĕçе вĕçленĕ. Чăн та, вĕсенче «иккĕмĕш çăкăра» ячĕшĕн кăна лартса хăварнă. Республикăри чи пысăк лаптăк Патăрьел районĕнче – 1761 гектар. Çак вăхăт тĕлне ĕçченсем çĕр улмин 99,6 процентне кăларса пуçтарнă. Апла паян-ыран çак ĕçе вĕçлемелле. Малтанлăха палăртнă тăрăх гектартан 157 центнер тухать. Пахча çимĕç 216 гектар çинчен пушаннă (планпа пăхнин 28,7 процентĕ).

Кĕрхи культурăсене 85 239 гектар çинче акнă, 101 128 гектар çĕртме сухи тунă.

## Диплом, килĕшӳ – пĕр тĕвĕре

Авăнăн 19-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Сочире иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери XIII инвестици форумĕн «Раççей Европăпа Ази хушшинче: паянхи условисенчи çĕнĕ регион политики» темăпа йĕркеленĕ пĕрлехи ларăвне хутшăннă.

Форумра Раççейĕн экономикăпа политика лару-тăрăвĕнчи пысăк улшăнусем çинчен РФ Правительствин Председателĕ Дмитрий Медведев тухса калаçнă.

Лару хыççăн «Обязательствăсене мĕнле пурнăçламалла, ăнăçу мĕнле тумалла» темăпа дискусси иртнĕ. Ăна Раççей Правительствин вице-премьерĕ Ольга Голодец ертсе пынă. Чăваш Ен Пĕтĕм Раççейри регионсен социаллă аталанăвĕн программин конкурсне «Лекотека – вăйă территорийĕ» проектпа хутшăнса «Çынлăх» номинацире çĕнтернĕ. Çавна май Ольга Голодец Михаил Игнатьева дипломпа чысланă.

Çак кунах Пĕтĕм тĕнчери «Сочи – 2014» инвестици форумĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ тата Раççей Перекет банкĕн правленийĕн председателĕ, президенчĕ Герман Греф банкпа республика тачă çыхăну тытса ĕçлесси çинчен калакан килĕшĕве алă пуснă. Унсăр пуçне Севастополь хулипе, Ставрополь крайĕпе тата Ямал-Ненец автономи округĕпе те.

Тепĕр кун та тухăçлă иртнĕ: Михаил Игнатьев тата РФ промышленноçпа суту-илӳ министрĕ Денис Мантуров ЧР Министрсен Кабинечĕ тата асăннă министерство çыхăнса ĕçлесси çинчен калакан килĕшĕве алă пуснă. Çавăн пекех тепĕр килĕшӳ те çуралнă – ăна Крым Республикин пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Сергей Аксеновпа алă пуснă.

Форум вăхăтĕнчех Чăваш Ен Пуçлăхĕ рейтинг комитечĕн уçă ларăвĕнче пулнă. Унта РФ субъекчĕсенчи инвестици климачĕн наци рейтингĕн пилот тапхăрне пĕтĕмлетнĕ. Сăмах илнĕ май Михаил Васильевич çак рейтинг федераци субъекчĕсене хăйсен вăйлă та хавшак енĕсене объективлă хаклама пулăшни çинчен каланă.

Сочире Михаил Игнатьев РФ Правительствин членĕсемпе те тĕл пулса калаçнă, республикăна пырса тивекен ыйтусене сӳтсе явнă.

ВĂЙ ПАТĂР!

# Тăван кил ырри – чĕре ăшши



Яла килсен пӳрте кĕриччен вăл хуçалăхне пăхса çаврăнать. Унăн картишĕнче витепе сарай кураймастăн: картишпе пахча пĕр вĕçрен. Чаплă плитка сарнă тротуарпа айлăмалла шыв çулĕпе утатăн. Юнашарах шăнкăртатса юхать вăл. Икĕ айккипе шултра та яка чулсем хурса тухнăран питĕ илемлĕ курăнать. Юхан шывăн пĕр хĕрринче пахча çимĕç çитĕнет, тепĕр енче тинтерех кăларса пуçтарнă çĕр улми пусси. Çĕр улми кăçал тухăçпа савăнтарнă тет. Ара, кам иккĕлентĕр кун пирки? Илем ытамĕнче япăх çитĕнме намăс. Çĕртен тухакан çимĕç çакна туятех пулĕ. Шăнкăрти юхан шыв килти кӳлле юхса тухать.

Çапла пахча вĕçĕнче пысăк кӳлĕ сарăлса выртать. Вăл хăй пĕр тĕнче, ытарайми илем. Пахчари кашни кĕтес, кашни хуралтă вырăнлă, илемлĕ те типтерлĕ. Ытлашши нимĕн те çук, анчах пурне те тĕплĕ тунă. Кил-çуртран пуçласа картишпе пахчари кашни тăваткал метр çĕр илĕртет. Илемлĕх тĕнчин проектне тăваканĕ, пурнăçа кĕртекенĕ Канаш районĕнчи Çĕнĕ Шелттем çынни Николай Германович Николаев. Унăн хуçалăхĕ республикăри строительство министерствинчен пăхса хак пама çитнĕ специалистсене те тĕлĕнтернĕ. Ялти çурт çумĕнчи çĕр лаптăкне тирпей-илем кĕртессипе йĕркеленĕ конкурсра Николаевсен хуçалăхне пĕрремĕш вырăн панă.

Хальхи вăхăтра ял çыннисем çурчĕсене пĕри тепринчен илемлĕрех тума тăрăшаççĕ. Пахчисене мĕнлерех кăна чун кĕртмеççĕ пулĕ. Тĕрлĕ чечек тĕнчинче кама кăна курмастăн: юмахри паттăрсене те, выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕке те. Çӳпçапа ямалли япаласене илемлетсе иккĕмĕш пурнăç парнелеççĕ. Пуçа ĕçлеттерсен, ал-ура çыпăççуллă пулсан ним çукран темĕн те пĕр тума пулать. Хăйсем пурăнакан çурт тавраşне, урама, яла тăрăшсах илем кĕртекенсем республикăра нумай. Çулсеренех иртерекен конкурса 60-70 таран ĕç тăратаççĕ.

Çĕнĕ Шелттемри Николаевсен кил хуçалăхĕнче те чечексем ешермеççĕ мар, анчах кунта ытларах тĕплĕ хуçалăх илемĕ тыткăнлать. Мĕнле те пулин шăйрăк, çитменлĕх тупас тесен те кураймăн. Пурте вырăнлă, кашни ĕçе паха пурнăçланă, ĕмĕре юлтăр тенĕ ахăртнех.

Çуртран тухсан пахчари кӳлле анатăн та кимĕпе ярăнатăн. Илемлĕ шурă кимĕ хăнасене йышăнма ялан хатĕр. Кӳлĕри шыв тасалăхĕ çинчен те манман кил хуçи. Тăватă мăн фильтр тасатса тăрать ăна. Çавăнпа чир-чĕр çаклатасран шиклenmeсĕрех чун каниччен шывра чăмпăлтататăн. Ирсерен е каç пулттипе вăлтапа пулла тухса ларатăн. Тĕрлĕ пулă кунта çителĕклĕ. Кăмăл пулсан тытнă пулла ăшаласа çиетĕн. Килти кӳлĕ хĕрринче вăлтапа чуна кантармалла кăна ларнă чух пулла шыва каялла чăмтаратăн. Йĕри-тавра вĕççĕр-хĕрсĕр ырлăх!

"Ырă та ĕçчен çынран урăххине кĕтме пулать-и вара?" – терĕç Çĕнĕ Шелттем çыннисем. Хăйшĕн кăна тăрăшмасть Николаевсен çемйи. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пуç хунисене асăнса ялта чаплă палăк лартма хатĕрленеççĕ, ун çине çапăçу хирĕнчен таврăнайман кашни салтак ятне çырĕç, сăн ӳкерчĕкĕсене вырнаçтарĕç. Кунтах кăвак чăрăшсем лартса хăварасшăн, кану вырăнĕ йĕркелесшĕн. Пархатарлă ĕç тума Николай Николаев пулăшать. Ялти вăтам шкулта каллех вăл пулăшнипе кивĕ чӳречесене йăлтах çĕннипе улăштарнă, ăшăтмалли тытăма юсанă. Тăван ялĕшĕн тунă вак-тĕвек ытти ĕçсене асăнмăпăр та.

Николай Германович Николаев хальлĕхе Шупашкарта ĕçлесе пурăнать. Çĕнĕ кил-çурта паян аслă пиччĕшĕпе мăшăрĕ пăхаççĕ. Николаевсен йăхĕнче ăна-кăна пайлас, уйăрас йăла çук. Çак çурт пурин валли те пултăр тенĕ Николаевсен кĕçĕн ывăлĕ мĕн пур йышпа унта ура ярса пуснă чухне.

Çичĕ ывăлпа пĕр хĕр çитĕннĕ туслă çемьере. Ывăлсенчен пĕри вăхăтсăр çĕре кĕнĕ.

Паян пурăнакансем хăйсем çемьеллĕ, ача-пăчаллă, пурнăçра кашниех хăйĕн вырăнне тупнă. Анчах ашшĕ-амăшĕн тĕп килне манмаççĕ. Киввине пăсса çĕнĕ çурт тунă чухне строительсемпе пĕрле кашни ачи тăрăшнă. Çавнашкал чунлă вĕсем: самант та ĕççĕр ларасшăн мар. Ĕçлекен валли яланах ĕç тупăнать теççĕ. "Николай Германович тума пĕлменни çук та пулĕ", – палăртать аслă пиччĕшĕн мăшăрĕ Лидия Васильевна. Тĕлĕнме пăрахмасть унран хĕрарăм. Пĕчĕкренех нимĕнле ĕçе те тиркемен: варени-компот та тунă, кăмпапа çырлана çӳреме юратнă, ашшĕпе амăшне кил хуçалăхĕнче пулăшнă, колхоз ĕçне те хутшăннă. Николаевсен кинне вăл тума пултарайман ĕçе палăртма йывăр пулчĕ. Яла килсен халĕ те ларма-тăма пĕлмест. Ытарайми кил хуçалăхне хăтлăх кĕртес тесе пĕтĕмпех тунă темелле, вăл пур пĕр ĕç тупать. Мăшăрĕпе ачисем те çавнашкалах. Аслă пиччĕшĕпе арăмĕн те канма вăхăт çукчĕ. Лидия Васильевна илемлĕ тротуарсем çине тирек çулçи тăкăнсах тăнишĕн пăшăрханатчĕ. Тăтăш шăлса тăрать вăл вĕсене. Пахчари юлашки тымар çимĕçе пуçтармалла, теплицăна тасатмалла тата ытти те.

Шĕвĕр тăрăллă тирек йывăççисене хăй вăхăтĕнче вăрман хуçалăх институтне пĕтернĕ пиччĕшĕсенчен пĕри илсе килсе лартнă. Çурт хăпартнă чухне пĕр йывăçа та касман Николаевсем. Хурлăхан тĕми акă шăпах çурт лартмалли вырăнта ӳснĕ. Николай Германович ăна урăх вырăна куçарнă. Ашшĕ-амăшĕ лартнă улмуççисен пурнăçне те татман. Йăлт сыхласа хăварнă.

Çурт ăшчиккине те музейри пек пăхса хаклатăн. Çав тери хăтлă, хулари тепĕр хваттер те кун пек мар пулĕ. Туалет та ăшă пӳртрех.

Николай Германович ашшĕ-амăшне, пиччĕшĕсемпе йăмăкĕн çемйисене хисеплени пӳлĕмсенче тӳрех палăрать. Стена çине кашнин сăн ӳкерчĕкне çакнă. Ашшĕпе амăшĕ хăйне пăхса ӳстернĕ кивĕ йывăç çурт ӳкерчĕкне те ятарлă рамăна вырнаçтарнă. Ашшĕ 67 çултах пурнăçран уйрăлнă. Амăшĕ 80-ра ĕмĕрлĕх куç хупнă. Урисем ыратнипе аптăранă вăл. Çамрăк каччă амăшне сыватас тесех пулĕ Хусанти фармаци институтне çул тытнă. Ăна пĕтерсен пĕр вăхăт Шупашкарти "Фармация" пĕрлешĕве ертсе пынă. Мăшăрĕ те çак енпех ĕçленĕ. Аслă ывăлĕ вара халĕ Питĕрти колледжра ихтиолога вĕренет. Ашшĕне хывнă тейĕн. Лешĕ халĕ те пулă тытма, сунара çӳреме вăхăт тупать. Николаевсен кинĕсем те пулă тытма ăста иккен. Лидия Васильевна каççерен пулăçă кĕнекине "шĕкĕлчет". Ара килти кӳлĕри пулăсем çинчен йăлт пĕлмелле мар-и: тĕрĕс апатлантарма, пăхма, тытма чухламалла.

**Ирина НИКИТИНА.**

# «Яла пĕр купа укçапа та улăштармастăп»

Çак хĕрарăма пăрчăканпа танлаштарма пулать. Вăр-варскер пур çĕре те ĕлкĕрет, кашни ĕçе тĕплĕн пурнăçлать. Ахальтен мар ун пирки ачисем: «Анне аллинче ĕç вылянать», – теççĕ.

Сăмахăм Канаш районĕнчи Анаткас Татмăш ялĕнче пурăнакан Алена Владимирова пирки пырать. Сакăр ачаллă Валентинăпа Михаил Константиновсен çемйинче çуралса ӳснĕ вăл. Йышлă çемьере çитĕнекен ачасем ĕçпе ӳсни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Çавăнпах ĕнтĕ Константиновсен йăхĕ пултаруллă та маттур. Вĕсем стройкăра тăрăшаççĕ, кăмака тăваççĕ, ал ĕçĕпе аппаланаççĕ. «Ĕç йĕркикуркине пĕлсен хам та кăмака тума хирĕç мар, – терĕ Алена Михайловна. – Кирпĕч купалама пĕлетĕп. Хӳмесене хамах тунă. Пуртăпа, циркулярпа ĕçлесси те маншăн киленĕç çеç. Малашне сварщик ĕçне хăнăхасшăн. Упăшка Мускаврa вăй хунă май кил тĕрĕшри ĕçсене хамăн тума тивет. Мăшăр вутă çурнине эпĕ ас тумастăп та. Чунпа канса ĕçлетĕп».

Икĕ хутлă кермен хăпартнă Владимировсем. Шалта юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Вĕсене хĕрĕпе Ольăпа пурнăçлать кил хуçи хĕрарăмĕ. Мăшăрĕ Мускавран таврăнасса кĕтмест. Çав вăхăтрах çыхма-тĕрлеме те вăхăт тупать вăл. Чун киленĕçĕсĕр пурăнаймасть Алена. Алса-чăлхасăр пуçне тумтир те çыхать. Унăн аллинче чĕнтĕр йĕппи те вылянса çеç тăрать. Алă ĕçне амăшĕнчен вĕреннине пĕлтерчĕ. Валенти-



на Михайловна ĕмĕр тăршшĕпе фермăра тăрăшнă. Сакăр ачине ура çине тăратас тесе кĕпе-тумтир çĕленĕ, алса-чăлха çыхнă. «Кăмака алăкĕ чĕтренсе çеç тăратчĕ. Шкултан килсенех унтан апат кăларса çиеттĕмĕр. Пысăк чукунри шаркку тути халĕ те чĕлхе çинчен каймасть», – аса илет иртнине Алена Михайловна. Ачисем тутă, тирпейлĕ çӳречĕр тесе мĕн чухлĕ тăрăшман-ши Константиновсем? Ывăл-хĕрне çитĕнтерме çăмăл пулман вĕсене. Халĕ тĕпренчĕкĕсем ашшĕ-амăшне хăйсем пулăшаççĕ. Мăнукĕсем те 50 яхăн.

Юрлама-ташлама та ăста Алена Михайловна. Туй-çуй иртермелле пулсан тӳрех ун патне пырать ял çынни. Халĕ туй юррине пĕлекен çукрах таврара. Çавăнпа та вăл ку тĕлĕшпе те ыттисенчен уйрăлса тăрать. Хушпу,чăваш кĕпи – шкапра яланах хатĕр. Чăваш йăли-йĕркине пĕтересшĕн мар ентешсем. Туй юрри илтĕнни те, тухья-хушпу çинчи нухрат чăнкăртатни те пĕлтерĕшлĕ уявра.

Мăшăрĕпе Олег Алексеевичпа виçĕ ача çитĕнтернĕ вĕсем. Иккĕшĕ кил-çуртран вĕçсе тухнă, хăйсем çемьеллĕ. Кĕçĕн хĕрĕ Шупашкарта вĕренет. Ĕçчен çынсен ачисем те маттур. Хĕрĕсем пĕчĕкренех амăшĕ пек алă ĕçĕпе ӳснĕ. Ывăлĕ ашшĕ çулне суйланă. Валентинăпа Ольга шкулта вĕреннĕ вăхăтрах район, республика, Раççей шайĕнчи куравсене хутшăннă, çĕнтернĕ те.

Хĕрарăм кил-çуртне тирпей-илем кӳрес тĕлĕшпе те тăрăшать. Унăн пахчине кам кăна ăмсанмасть пулĕ! Унта-кунта выртса çӳрекен пластик бутылкăсенчен тата ытти япаларан мĕн кăна тумасть вăл. Халĕ шампань эрехĕн кĕленчине пухать. Унран клумба тăвас шухăшлă. Пластик бутылкăран ăсталанă сысна çурисем те илĕртӳллĕ. Хăш-пĕр тĕлĕнтермĕше хăй шухăшласа кăларать, теприне интернетран илет.

Килне, мăшăрне, ачи-пăчине, тăванпĕтенне, ял çыннине чунран юратать вăл. Ахальтен мар: «Яла пĕр купа укçапа та, ылтăнпа та улăштармастăп», – тет. Хула пурнăçĕ нимĕнпе те илĕртмест ăна. Çавăнпах ĕнтĕ хăй вăхăтĕнче унтан тăван тăрăхне таврăннă. Кунта телейне тупнă, йăва çавăрнă, ачисене ӳстернĕ. Тулли пурнăçпа, таса сывлăшпа, юратнă ĕçпе киленет ял хĕрарăмĕ.

**Валентина ПЕТРОВА.**



Раҫҫейре, тӗнчере

# Тыр-пул ӑнса пулчӗ-ха...

## Ӑна упраса хӑварсан тем пекехчӗ

**Кӑҫалхи тӗш тырӑн 80 процентне пӳлмене кӗни ҫинчен пӗлтерет Раҫҫей Ял хуҫалӑх министерстви. 2009 ҫулта чи нумай тырӑ пухса илнӗ шая ҫитме шанӑҫ пур-и? Ҫанталӑк лайӑх тӑрсан ҫав цифрӑна ҫывхаратпӑр теҫҫӗ. Сахӑр кӑшманӗ, ҫӗр улми тата ытти пахча ҫимӗҫ лайӑх тухӑҫпа савӑнтармалла.**



## Пӳлмере выртаканни ҫӗрмест-и?

Ял ӗҫченӗсемшӗн 2009 ҫул чӑннипех ӑнӑҫлӑ килсе тухрӗ: 108 млн тонна тырӑ ҫапса тӗшӗленӗ. 2014 ҫулта 104 млн тоннӑран кая мар пухса кӗртесси ҫинчен каларӗҫ, уяр ҫанталӑкра тырӑ ытларах пуласси те куҫкӗрет. Унчченхи саппассене шутласан тырӑ фончӗ 117 млн тоннӑпа танлашӗ. Хамӑра 70 млн кирлӗ пулсан 30 миллионӗ чикӗ леш енне ӑсанасси паллӑ.

Аграри ведомствин ертӳҫисен кӑмӑлӗ ҫӗкленӳллӗ: черетлӗ рекорда ҫывхаратпӑр-ҫке. Анчах пухса кӗртнин миҫе процентне упраса хӑварма пултараятпӑр-ши тесе ыйтсан хӑпартлану таҫта кайса кӗрет. Ҫухату виҫи ҫинчен ҫӑвар та уҫасшӑн мар.

Раҫҫейри тыр-пул ӳстерекенсен пӗрлӗхӗн ертӳҫи Аркадий Злочевский каланӑ тӑрӑх – ку чухнехи технологипе тунӑ управсем ҫитменнипе тӗш тырӑ тата пахча ҫимӗҫ нумай пӗтет. Ҫанталӑк ҫумӑра кайнипе уйран нӳрӗ тырӑ килме пуҫларӗ. Ӑна ҫийӗнчех типӗтсе тасатма техника ҫукки ҫинчен хыпарлаҫҫӗ хуҫалӑхсем. Ку кӑлтӑк машинӑсем кӑларакан отрасль ӗҫлесе ҫитерейменнипе тата хресченсен ҫӗнӗ техника туянма укҫа ҫуккипе ҫыхӑннӑ-тӑр.

Элеваторсем 38 млн тонна ҫеҫ йышӑнма пултараҫҫӗ, вӗсенчен 40 процентӗ паянхи кун ыйтӑвне тивӗҫтермест – оборудовани кивелнӗ. Ҫак ларутӑрӑва министерство тӳре-шари лайӑх пӗлсе тӑнӑ, ҫӗнӗ хранилищӗсемпе элеваторсем тӑвассине тимлемен.

Патшалӑх резервӗнче упранакан тырӑ пирки кулянмалли ҫук. Ку элеваторсенчи условисене Россельхознадзор ҫыннисем тӗрӗслесех тӑраҫҫӗ. Оборудование ҫӗнетнӗ, кадрсене вӗрентсе хатӗрленӗ. Ытти ҫӗрте те ҫавӑн пек пулмалла ӗнтӗ.

## Упрасан упранать, укҫа сыхланать

2014 ҫулхи ҫӗр улми тухӑҫӗ пӗлтӗрхинчен уйрӑлса тӑмасть. "Иккӗмӗш ҫӑкӑр" ҫитӗнтерекенсен Канашӗн ӗҫ тӑвакан директорӗ Алексей Красильников ҫӗр-шывра пурӗ 30 млн тонна продукци пухса кӗртессине пӗлтернӗ. Ҫав шутра ял хуҫалӑх предприятийӗсенче – 6 млн тонна, ыттине килти хушма хуҫалӑх парать. Тӗрӗссипе, пире 20-22 млн тонна (11-12 млн тонни ҫиме каять, ытти – вӑрлӑха, продукци тирпейлекен отрасле, выльӑхсене тӑрантарма) ҫителӗклӗ.

Аграрисем каллех хранилищӗсен ыйтӑвне ҫӗклеҫҫӗ. Управ вырӑнӗсем 7 млн тонна йышӑнма пултараҫҫӗ-мӗн. Ҫав шута темиҫе ҫул усӑ курман е кивелсе юрӑхсӑра тухнисене те кӗртнӗ. Ҫӗр улмисӗр пуҫне кишӗр, ҫарӑк, хӗрлӗ кӑшман ӑҫта хӗл каҫӗ?

Пирӗн уйсенче ҫитӗнтерекен кӑшман калӑпӑшӗ кӑҫал сахалрах пуласси унччененех паллӑччӗ, ҫапах вӑл сахӑрӑн 76 процентне хатӗрлеме май парӗ. Бразилипе Беларуҫ Раҫҫейпе килӗшсе татӑлнӑ, чӗр тавар кӳрсе килесси иккӗлентермест.

Ку чухнехи хранилищӗсем тумасан пахча ҫимӗҫӗн пысӑк пайне сыхласа хӑвараймӑпӑр. Ҫавӑнпа ҫӗнӗ строительствӑна пуҫӑнакансем банкра кредит илсен патшалӑх процент ставкисене субсиди парса пулӑшни кирлӗ тесе шухӑшлатпӑр. Проектсем пур, анчах вӗсем ӗҫлемеҫҫӗ. Правительство ҫине тӑмасан каллех ҫурӑк валашка умӗнче юлӗ ял ӗҫченӗ.

## Йӳнӗпе сӗнсен те туянакан ҫук

Тӗлӗнмелле пулса пырать пирӗн ҫӗр-шывра. Фермерсем Раҫҫее тӑрантарӗҫ тесе пуҫаруллисене "симӗс ҫутӑ" пачӗҫ. Ҫӗре, юханнӑ фермӑна арендӑна илӗр те кӗрлеттерӗр терӗҫ. Ҫукран пур тумалла апла. Йывӑрлӑхран хӑраман, ӗҫлеме ӳркенмен ҫав ҫынсем патне ҫитсе килтӗмӗр.

**Орел** облаҫӗнчи Владимир Туркин виҫӗ ҫул каялла тыррине 5-6 пинпе сутнӑ, 9 пинпе парсан ура ҫине тӑратӑп-ха тесе сӑмахлатчӗ. Кӑҫал ун сӑн-пичӗ тӗксӗм те салхуччӗ.

– 3-4 пинпе сутсан юрӗччӗ, йӗркеллӗ ӗҫлесе каяймарӑм, – шухӑшлӑн тинкерет Владимир Васильевич. – Сутӑнмасан ҫӗртӗр пӗреххут. Тырӑсӑр пуҫне ман кӑҫал ҫӗр улми япӑх мар тухрӗ. Мускавра пулнӑччӗ, унта пӗр килограмӗ 50 тенкӗ. Ман ҫимӗҫе вуннӑпа туянакан та тупӑнмарӗ. Вӑт епле. Ҫутӑ та аслӑ пӳлӗмсенче йӗм ҫӗтсе ларакансем хӑйсем килсе пылчӑк ҫӑрса пӑхчӑр, пирӗн нушана тин ӑнланса илӗҫ.

Фермер кӑштах услам туса ялти шкул патне ҫул сарма ӗмӗтленнӗ иккен. Унта мӑшӑрӗ Людмила вӗрентет. Владимир – перекетлӗ хуҫа, ҫул валли укҫа пухкаланӑ. Ача-пӑчана хытарнӑ ҫул туса парсан та тем пекех-ҫке, асфальт ытла хакла ларать. Анчах районтан хыпар ҫитнӗ: малашлӑхсӑр шкула хупма хатӗрленеҫҫӗ, ачасене автобуспа 15 ҫухрӑмри шкула илсе ҫӳрӗҫ. Шкул ҫулӗ кама кирлӗ халь? Тен, ял масарӗ патне ҫул тусан лайӑхрах?

Туркин йышшисен район влаҫӗсенчен пулӑшу ыйтса кӗмӗҫленсе ҫӳрес йӑла ҫук. Кредит илме банка чупман. Вырӑнти тӳре-шара ун патне мӗнле ҫитмеллине те пӗлмест. Питӗ ӗҫлӗ ҫынсен вӑхӑчӗ те ҫукрах пуль ҫав.

**Краснодар** крайӗнче хресчен хуҫалӑхӗ йӗркеленӗ Евгений Василенко ҫав тери уҫӑ кӑмӑллӑ ҫын: мӗн шухӑшласа хунине нихӑҫан та ӑшра тытмасть, ялан куҫран калать.

– Пӑхатӑп та, пӗрисем уйран пуҫтарса кӗртнине ҫийӗнчех сутма ӑнтӑлаҫҫӗ, – тет вӑл. – Юлташсем, йӑнӑш утӑм тӑватӑр, ӑҫта хыпаланатӑр? Тӑхтасчӗ кӑштах. Пирӗн вӑхӑт ҫитмен-ха. Лавккасенче ют ҫӗр-шывран кӳнӗ апат-ҫимӗҫ сутӑнса пӗттӗр, вара эпир рынока тухӑпӑр. Хамӑр хаксемпе. Ку пурнӑҫ чеерех пулма хистет, унсӑрӑн пайтине кураймӑн. Банксем ҫич хут тире сӗвеҫҫӗ, ҫапах никам та нимӗн те шарламасть. Кредит политикине улӑштарасси пирки ҫӑвар уҫакан ҫук. Патшалӑх Думинчи аграрисен фракцийӗ Кремль йышӑнӑвӗсенчен иртеймест, ахӑртнех. Хӑюлӑх ҫитерсе хам трибуна умне тухса вирлӗ ҫунтарӑттӑм, чунра капланса килнине йӑлтах калӑттӑм. Анчах тислӗк шӑрши витӗр ҫапнӑ тумпа капӑр ҫурта кӗртмеҫҫӗ. Ан кулянӑр, Анӑҫ чарӑвӗсене пула выҫӑ вилмӗпӗр, ҫука юлмӑпӑр. Хамӑра тӑрантармалӑх туса илетпӗрех.

**Воронеж** облаҫӗнчи Александр Панкратов фермер вара никама та ӗненмест, хӑйӗн вӑйне кӑна шанать. Тахҫан миллионер-совхоз пулнӑ хуҫалӑх фермисене унтан та кунтан саплакаланӑ, вӗсенче 800 пуҫ сысна тытать. Тӑвӑррине кура тепӗр витене юсаса ҫӗнетме мӗнле вӑй ҫитернӗ-ши тесе шухӑшларӑм. Кун пирки сӑмах та шарламарӗ, хам та ыйтса чӑрмантармарӑм.

– Технологие пӑхӑнсан, ӗҫ майне пӗлсен тупӑшлӑ ферма хуҫи пулса тӑрӑп,– мухтанса каламасть Панкратов. – Ҫӗр ҫывӑрми пуҫа ватнӑ, цифрӑсем халӗ те куҫ умӗнче явӑнаҫҫӗ. Ан тив, эпир университетсем пӗтермен пулин те ӑна-кӑна тӗшмӗртетпӗр. Сӗнӳ-канаш паракана яланах хапӑл, вӗрентсе ҫӳрекенсене чӑтма пултараймастӑп. Авӑ, совхоз ҫӗрӗсем инҫете тӑсӑлса выртаҫҫӗ, сухаласа акакан тупӑнмарӗ. Техника туянса ҫав лаптӑксене чун кӗртесшӗн эпӗ. Ӗмӗтӗм хир анлӑш, анчах пӗр япала канӑҫ памасть. Пирӗн тӑрӑхра Африка чуми текен чир сарӑла пуҫларӗ. Ку санкцисенчен те хӑрушӑрах. Юнашар районта 50 пин пуҫ сыснана пусма тивнӗ. Ҫавӑ хӑратать. Тивӗҫлӗ службӑсем алӑ усса лармаҫҫӗ-ха, кӗрешеҫҫӗ. Ытти ҫулсенче чиперех ирттерсе янӑччӗ. Халь ҫав мур илесшӗ каллех пирӗн пата ҫаврӑнса ҫитрӗ курӑнать. Пӗтӗм хуҫалӑха кисретет вӗт.

**Рада БОЖЕНКО,**
**Юрий ГОЛУБЬ.**

## ЧӐВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВӖН ЭРНЕЛӖХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, авӑн уйӑхӗн 29-мӗшӗ**

18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ЫЛТӐН ҪӲПҪЕРЕН» (0+)
19.00 «ТУСЛӐХ ЙЫВӐҪӖ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ТАКИЕ ЖЕ» (16+)
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМӖ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Ытлари кун, авӑн уйӑхӗн 30-мӗшӗ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ЫЛТӐН ҪӲПҪЕРЕН» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ТӖПЛӖ КАЛАҪУ» (12+)
19.00 «ҪӖР ТИВЛЕЧӖ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «БУМЕРАНГ» (12+)
20.30 «ТРИ ЖЕЛАНИЯ» К 3-ЛЕТИЮ НТРК ЧУВАШИИ (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМӖ
21.15 «ТӖПЛӖ КАЛАҪУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Юн кун, юпа уйӑхӗн 1-мӗшӗ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ТӖПЛӖ КАЛАҪУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ЯЛАН ЯНРА, ЧӐВАШ СӐМАХӖ...» (12+)
19.00 «ЯШ ЧУХ, ҪАМРӐК ЧУХ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «СПОРТ ДЛЯ ВСЕХ» (12+)
20.30 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (6+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМӖ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Кӗҫнерни кун, юпа уйӑхӗн 2-мӗшӗ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧӐВАШ СӐМАХӖ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ТӖПЛӖ КАЛАҪУ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «КРУГЛЫЙ СТОЛ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМӖ
21.15 «ТӖПЛӖ КАЛАҪУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Эрне кун, юпа уйӑхӗн 3-мӗшӗ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ТӖПЛӖ КАЛАҪУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ЧӐВАШ ХАЛӐХ ЮМАХӖСЕМ» (0+)
19.00 «ЭХ, ЮРРӐМ, ЯНӐРА» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМ. ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (6+)
20.30 «НАОБУМ» (12+)
21.00 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
21.15 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМӖ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Шӑмат кун, юпа уйӑхӗн 4-мӗшӗ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ЧӐВАШ ХАЛӐХ ЮМАХӖСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФ. ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «ВРЕМЯ ВКУСА» (6+)
9.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
10.00 «ҪӖЛЕН ТЫТАКАН». ЧӐВАШЛА КУҪАРНӐ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «БУМЕРАНГ» (12+)
17.30 «ТРИ ЖЕЛАНИЯ» К 3-ЛЕТИЮ НТРК ЧУВАШИИ (12+)
18.00 «ОТКРЫТЫЙ РЕГИОН» (12+)
18.30 «ТАКИЕ ЖЕ» (12+)
19.00 «ҪӖР ТИВЛЕЧӖ» (12+)
19.30 «КАҪХИ ТӖЛПУЛУ» (12+)

**Вырсарни кун, юпа уйӑхӗн 5-мӗшӗ**

9.00 «ВРЕМЯ ВКУСА» (6+)
9.00 «ЫЛТӐН ҪӲПҪЕРЕН» (6+)
10.00 «МАУГЛИ». ЧӐВАШЛА КУҪАРНӐ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «КРУГЛЫЙ СТОЛ» (6+)
17.30 «НАОБУМ» (12+)
18.00 «СПОРТ ДЛЯ ВСЕХ» (6+)
18.30 «ПЕХИЛ» (12+)
19.00 «ЮРӐСЕН ЮРРИ». КОНЦЕРТ

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Авăн, 24 – юн кун | Авăн, 25 – кĕçнерни кун | Авăн, 26 – эрне кун | Авăн, 27 – шăмат кун | Авăн, 28 – вырсарни кун | Авăн, 29 – тунти кун | Авăн, 30 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 6.39 | 6.41 | 6.43 | 6.45 | 6.47 | 6.49 | 6.49 |
| | анать | 18.45 | 18.42 | 18.40 | 18.37 | 18.34 | 18.32 | 18.32 |
| Кун тăршшĕ | | 12.06 | 12.01 | 11.57 | 11.52 | 11.47 | 11.43 | 11.43 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 1-мĕш кун | 2-мĕш кун | 3-мĕш кун | 4-мĕш кун | 5-мĕш кун | 6-мĕш кун | 7-мĕш кун |
| | | Тараса паллинче | Тараса паллинче | Тараса паллинче | Скорпион паллинче | Скорпион паллинче | Ухăçă паллинче | Ухăçă паллинче |

## КУЛЬТУРА ÇУЛТАЛĂКĔ

# Ăру юрри ăру тытать





### Купăс сасси янăрать

Каçал тăрăхĕнче йăла-йĕркене упракансем пурри савăнтарчĕ. Акă Çĕнĕ Мăрат çамрăкĕсем салтак юррине çулсеренех шăрантараççĕ. Хĕсмете каякан çамрăка хисеплесе рет те йĕркелеççĕ кунта. Хăш вăхăтра мĕн юрламалли таранах пĕлеççĕ каччăсем. Авалхи йăлана ăруран-ăрăва тытса пыраççĕ вĕсем. Районти çар комиссариачĕ умĕнче те салтак юрри шăрантараççĕ. Тÿрех: «Мăратсем çитрĕç», – теççĕ вĕсем пирки. Салтак ăсатма 30-40 каччă пухăнать. Виçшер-тăватшар купăспа юрă-кĕвĕ каласçĕ. Кун пек ÿкерчĕке хăш тăрăхра курма пулĕ-ши тата?

Тĕрĕссипе, ялсенче купăс калама пĕлекен çын юлмарĕ. Халĕ пĕр-пĕр уяв йĕркелес пулсан та унсăр иртерес пулать. Çĕнĕ Мăратра вара çакнашкал нуша çук. Кунта купăсçă килсерен тенĕ пекех. Мĕнпе çыхăннă-ши çакă?

Ыйтăва уçăмлатма информаципе культура центрĕн пултарулăх ертÿçи Ирина Мартынова пулăшрĕ. «Вăрман тăрăхĕнче питĕ пултаруллă çынсем пурăнаççĕ, – терĕ вăл. – Ял-йыш юрлама-ташлама юратать, йăла-йĕркене упрама тăрăшать. Каччăсемпе хĕрсем туй юррисем вĕренеççĕ. Туя чăвашла иртересси йăлана кĕчĕ. Çамрăксем купăс калама пĕр-пĕринчен хăнăхаççĕ. Тукай ялĕнче ÿнер шкулĕн филиалĕ ĕçлет. Хăй вăхăтĕнче Николай Ильин чылай ачана кĕвве-çемме юратма вĕрентрĕ. Унăн вĕренекенĕсем паян çамрăк ăрăва ăс параççĕ. Николай Андреевич ертсе пыракан хор районта çеç мар, республикăра та малтисен ретĕнче шутланнă. Унăн никĕсĕ çирĕп пулчĕ. Хăй çамрăклах пурнăçран уйрăлчĕ пулсан та ячĕ халăх асĕнче упранать».

Ахальтен мар ку тăрăхра музыка училищи пĕтернĕ çамрăк та чылай. Пĕлĕвĕсене малалла тăсас тĕлĕшпе вĕсем Шупашкарти культура институ-тĕнче фольклор енĕпе вĕренеççĕ. Сăмах май, культура çурчĕн директорĕ Любовь Павлова Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче Зинаида Козлова патĕнче пĕлĕвне туптать. Унран вĕреннĕ юрра-кĕвве каярахпа «Шурăмпуç» фольклор ушкăнĕ шăрантарать.

### Ватти-вĕтти юрлать

Çĕнĕ Мăратри информаципе культура центрне ял тăрăхĕнчи 5 клуб, 4 библиотека тата 1 музей кĕрет. Культура ĕçченĕсем пĕр-пĕринпе тачă çы-хăнса ĕçлеççĕ. Уяв ирттермелле-и е концертпа унта-кунта каймалла – пурте хаваспах хутшăнаççĕ. Пĕри халăха пуçтарать, тепри пуçлăхсем патне транспорт пирки чупать, виççĕмĕшĕ сцена тумтирĕшĕн яваплă. Анат Тимĕрчкассинчи клубра ĕçлекен Мария Петрова вара шÿрпе тутлă пĕçерет. Унăн яшкине районĕпе çисе киленеççĕ.

Центр çумĕнче эстрада, фольклор, вокал, ташă, драма тата агитбригада ушкăнĕсем ĕçлеççĕ. Сăмахран, «Ватă ăшши» ушкăна аслă ăрури çынсем çÿреççĕ пулсан, «Шурăмпуçа» – вăй питтисем. Ачасен вара «Шăпчăксем» фольклор ушкăнĕ ĕçлет. «Пирĕн спутниксем вĕсем», – теççĕ аслисем çамрăк ăру пирки. Кĕçĕннисем хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарсах тăраççĕ. Кăçал регионсен хушшинчи «Пĕчĕкçеç путене» фестивальте пĕрремĕш, тĕрĕк халăхĕсен пĕтĕм тĕнчери «Урмай-залида» фестивалĕнче виççĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ.

«Кăштах укçа ĕçлесе илес тĕллевпе ташă каçĕсене тÿлевлĕ йĕркелетпĕр. Унсăр пуçне çĕнĕ çулта лотерей билечĕсем сутатпăр, конкурссем ирттеретпĕр. Алă çавăрмалăх укçа пултăр тетпĕр. Юсав ĕçĕсем валли те нухрат кирлĕ», – пĕлтерчĕ Любовь Васильевна директор.

Чылай культура çурчĕн шăпи пур çĕрте те пĕрешкел пулас. Çурхи-кĕрхи çумăр вăхăтĕнче шыв анать е кĕвĕ-çемĕ хатĕрĕ çитмест. Çĕнĕ Мăратра та çак ыйтусем чуна ыраттараççĕ. Чăн та, ятарлă конкурса хутшăнса тăрă ыйтăвне татнă вĕсем. Халĕ çумăр хăратаймасть. Анчах та лайăх пурăнас тесен сцена тумтирĕ те, музыка хатĕр-хĕтĕрĕ те кирлех. Çавăнпа та «Ялти культура çурчĕсене юсаса çĕнетес» программăна хутшăнма тĕллев тытнă ĕçченсем. Кунта çĕнтерсен, паллах, сцена тумтирĕ те, çутăпа сасă аппаратури те, аудио тата видеотехника та пулĕ. Хăйсем тăрăшнине кура ĕмĕчĕсем çитсе пыччăрах.

### Чăвашлăхшăн çунакансем

Вулакана «Шурăмпуç» фольклор ушкăнĕпе çывăхрах паллаштарас килчĕ. Ялти хастар çамрăксем тăрăшнипе 1995 çулта йĕркеленнĕ вăл. Икĕ çултанах «халăх» ятне тивĕçнĕ. Ытти ансамбль пекех кашни виçĕ çултан артистсем çак ята хÿтĕлеççĕ. Репертуарта – йăла-йĕрке, вырăнти юрăсем. «Килĕшекеннине ытти ушкăнран та илме тăрăшатпăр, – терĕ Галина Степанова ертÿçĕ. – Тăван культурăна чăннипех юратакан, чăвашлăхшăн çунса тăракан çынсем çÿреççĕ кунта. Çа-вăнпа та ушкăн çирĕп чăмăртаннă. 4-5 ял çыннине пĕрлештерет «Шурăмпуç». Тепĕр чухне сцена çине 20-30 çын та тухать. Паллах, арçынсем Мускава кайнă хушăра йыш сахалланать».

«Шурăмпуçшăн» кăçал ăнăçлă çул шутланать. Район, республика мероприятийĕсене хутшăнса малти вырăнсене çĕнсе илнĕ. Унсăр пуçне Чул хула тăрăхĕнче иртнĕ «Хрустальный ключ» фестивале те хутшăннă. Ăна кăçалхипе вуннăмĕш хут йĕркеленĕ. Уявра 30 ытла фольклор ушкăнĕ пулнă. «Шурăмпуçа» ăшшăн кĕтсе илни, чăваш çи-пуçĕпе халăх кăсăкланни савăнтарнă ентешсене.

«Чăваш юрри-кĕвви пурне те пĕрлештерчĕ, – аса илет Ирина Мартынова. – Эпир ташлама тытăнсан пурте пирĕн çума çыпçăнчĕç. Вырăсĕ, тутарĕ, пушкăрчĕ, негрĕ, грузинĕ чăваш такмакĕпе яра патăмăр ташша. Пир кĕпесене хăнасем тыта-тыта пăхрĕç, хушпу-тухьяна ăмсанса сăнарĕç».

Пир кĕпе тенĕрен çакна каламалла: сцена тумтирĕ пĕтĕмпех асанне арчинчен тухать. Тĕртнĕ кĕпе çав тери лайăххине палăртрĕç хĕрарăмсем. Унпа шăрăхра та пăчă мар, сивĕре те шăнмастăн. Çи-пуç туянма укçа çук тесе кулянса лармаççĕ фольклор ушкăнне çÿрекенсем. Ăна-кăна туянаççĕ те хăйсемех çĕлеççĕ. Хушпу-тухьяна та хăйсем ăсталанă. Арçын кĕписем кивелнине пула вĕсене те çĕннипе улăштарма май тупнă. Халĕ пушмаксем туянасшăн. Çакнашкал ĕçсене хăйсемех пурнăçлаççĕ. Малашне вара укçа ĕçлесе илес тĕллевпе пурăнаççĕ. Кăштах тыткалама нухрат та кирлĕ. Унта-кунта концертпа тухсан бензин укçине саплаштарма пултарни те пĕлтерĕшлĕ. Мĕн калăн, пасар пурнăçĕ укçа-тенке кăмăллать.

«Ĕмĕтсем вĕçĕ-хĕррисĕр пирĕн. Хăшне-пĕрне уçса парсан çылăх пулас çук, – сăпайлăн калаçрĕ Галина Геннадьевна. Ушкăнпа Питĕр хулине çитсе килме шухăшлатпăр».

Чул хуларан хăпартланса таврăнни сĕвĕрĕлме ĕлкĕреймен-ха ентешсен. Савăк кăмăл-туйăмпа пурăнаççĕ вĕсем. Ара, çынна ырă сунни, мухтани малалла çĕкленме май парать, япăх калани вара – уraран ÿкерет.

**Валентина ПЕТРОВА.**

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 24.09 | 25.09 |
|---|---|---|---|
| Температура, °C | 2–4 сехетре | +6 | +6 |
| | 14–16 сехетре | +17 | +18 |
| Çумăр çăвать | | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 757 | 758 |


## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРŸСЕМ

### ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – **33** руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**6. Песок,** гравмассу, чернозем, **торф,** щебень, **бой кирпича** с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**23. Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Доставка. Тел. 89061355241.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**550. Гравмассу, песок** речной, **щебень.** Доставка. Т.: 89176500385, 89603073399.

**583. Гравмассу, песок, торф, щебень.** Т. 89050282225.

**591. Мед цветочный с собственной пасеки** с доставкой. Т. 89279903070.

**618. Копалки,** сортировки, **плуги,** дискаторы, разбрасыватели. Дешево. Доставка! Т. 8-937-955-98-02.



«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР ТИВĔÇĔСЕНЕ ПУРНĂÇЛАКАН – Г. А. МАКСИМОВ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305[1] регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă.
Заказ 3602
Тираж 3752

* Рекламăпа пĕлтерÿсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерÿсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.